# АДАПТИРОВАННАЯ РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**по учебному предмету «Литературное чтение на чувашском языке » в 3 классе (предметная область «Родной язык и литературное чтение на родном языке») для ОВЗ (ЗПР)**

## Умĕн калани

Рабочая программа по литературному чтению (на чув. языке) для 3 класса составлена в соответствии с Федеральным государственным образовательным стандартом начального общего образования, на основе Программы («Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисем», чăваш шкулĕн I–IV классем валли. М.К. Волков, Л.П.Сергеев, Т. В. Артемьева, О. И. Печников, Кульева А. Р.Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательстви: 2013 çул).

Литература вулавĕн урокĕсен ***тĕп тĕллевĕ***:

Вĕренекенсен пирвайхи вулав ăслайне, унăн тĕрĕслĕхĕпе хăвăртлăхне, ăнланулăхĕпе палăртулăхне куллен лайăхлатасси;ачасене хайлава туллин ăнланакан тăвасси, вĕсен ырăпа усала туяс туйăмне, илем сисĕмне амалантарасси, тĕнче курăмне анлăлатасси; текстпа ĕçлеме вĕрентесси, кĕнекене харкам тĕллĕн вулама хавхалантарасси.

Паянхи пурнăç литература вулавĕ умне çĕнĕ ***задачăсем*** кăларса тăратрĕ:

-Ача çитĕнсе çитнĕ тĕле мĕнпур этемлĕхĕн çырулăх пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме пултартăр;

-Тĕнче литературин пӳлминче чăваш литературин тӳпи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнкартăр;

-Хайлава туллин ăнланма ăна хайланă чухнехи евĕрех йывăррине асăрхатăр;

-Кирек- хăш хайлав та пысăк шыравра çуралнине, вăл çыравçă пуçĕнче шăранса калăпланнă, шухăшласа кăларнă япала иккенне тĕшмĕртĕр, хăй те хайлав ĕçне явăçма сĕмлентĕр;

-Ача-пăча ăс-тăн тĕлĕшĕнчен çеç мар, кăмăл-сипетпе туйăм-суннăм тĕлĕшĕнчен те тасалса пуянлантăр.

**Программăна пурнăçлама çак вĕренӳ пособийĕсемпе усă курнă:**

Артемьева Т. В., Печников О.,И. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ (Зернышко). 1 класс. 1-мĕшпе 2-мĕш пайĕсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2014.

Т.В.Артемьева, О.И.Печников. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Ешĕл калча. 2 класс. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-тви, 2014;

Артемьева Т. В., Печников О.,И. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Ылтăн пучах. 3-мĕш класс. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2014.

Артемьева Т. В., Печников О.,И. Вĕренӳ пособийĕ. Литература вулавĕ. Пучах çумне пучах. 4-мĕш класс. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2014.

## 1. Ачасенчен 3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем

***1 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем***

**Харкамлăх результачĕсем:**

- вĕренекенсен социаллă тата кăмăл-сипет опычĕ пуянланса пыни;

- ачасем çитĕннĕ май этемлĕхĕн литература пуянлăхне ăнланма: хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;

- вулав хатĕрĕсем урлă ачасен чунĕнче çынлăх, тивĕçлĕхпе яваплăх туйăмĕсем аталанса пыма пуçлани, пурнăçра лайăххипе начаррине, ыррипе усаллине уйăрма ăнтăлни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- вĕренекенсем ăс-тăн тĕлшĕнчен аталанса пыни;

- пуплев ĕç-хĕлĕн пур тĕсĕсем те аталанса пыни; ятарлă ăнлавсемпе терминсен пĕлтерĕшĕсене уçăмласа ăша хывма хăнăхса пыни;

- ачасем ăслав ĕçĕпе кăсăкланма пуçлани;

- вĕрену ăслай- хăнăхăвĕсем йĕркеленме пуçлани.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**
-ачасен хăйсен усĕмне тивĕçтерекен илемлĕ  хайлавсене итлес-вулас кăмăл амаланни;

- калăпăшĕпе  пысăках маар,  ансат сюжетпа ансат интригăллă, ансат жанлрă илемлĕ хайлавсене  итлесе е вуласа йышăнма,  ăнланма, туйса илме вĕренсе пыни;

- илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланни: проза та поэзи хайлавĕсен хăй евĕрлĕхне туйма пуçланни;

- литература жанрĕсем çинчен пĕтĕмĕшле ăнланăвĕ калăпланма пуçлани;

- илемлĕ  хайлавпа ĕçлемелли пуçламăш хăнăхусем калăпланни, хайлавсен содержанине ăса хывмалли тата асăмламалли мелсĕне вĕренсе пыни;

- ача хăй те хайлас ĕçе явăçма сĕмленни.

**2 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем**
**Харкамлăх результачĕсем:**

- сăмах искусствипе киленме вĕренсе пыни;
- тăван халăх тата куршĕ халăхсен культурине хисеплеме, пуринпе те тусĕмлĕ те çураçуллă пулма хăнăхса пыни;
- илемлĕ хайлавсем вуланă-тишкернĕ май ачасен илем туйăмĕ аталанни, вĕсен илем пахалăхĕсене ăша хуни.
**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- тĕрлĕ хайлав тишкернĕ май хăйсен тата ыттисен ĕç-хĕлне сăнама, хаклама хăнăхма пуçлани;
- вуласа е итлесе пĕлнĕ информацие ăса хывма, асамлама вĕренсе пыни;
- мăшăршарăн, ушкăнпа пĕрле ĕçлеме – хăйсем хушшинче рольсемпе ĕçсене уйăрма, пĕрлĕхлĕ ĕçĕн  харкам пайне пурнăçлама вĕренме пуçлани.
**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- вулав пахалăхĕсем çирĕпленни, вулав тĕсĕсемпе мелĕсене алла илсе пыни;
- сасăллă пуплевĕн пĕлтерĕшлĕ мелĕсене (хăвăртлăхĕ, янаравлăхĕ, кевелехе) кирле пек улаштарма веренни;
- текст тишкеревне малалла веренсе пыни;
- ансат жанрсене (юмах, калав, сава) пер-перинчен уйарса илме пултарни;
- хаш-пер илемлех мелесене (танлаштару эпитет, метафора) курма-санама тытанни;
- литература пелевен ансат анлавесемпе паллашни.

***3 класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем***
**Харкамлăх результачĕсем:**
- тăван халăхăн авалхи кун-çулĕпе: унăн тĕрлĕ тапхăрта палăртнă ывăл-хĕрĕпе: вĕсен пархатарлă ĕçĕсемпе паллашнă май харкам мĕнле халăхран тухнине ăша хуни,  çакăнпа мăнаçланас туйăм çирĕпленни;

- тăван халăх культурин,  халăх сăмахлăхĕн тытăмĕпе ăшлăхĕ мĕн тери пуян пулнине курма, несĕлĕмĕрсем ăна ĕмĕрсем хушши упраса, туптаса паянхи куна çитерме пултарнине ăша хывса пыни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**
- словарьсемпе,  справочниксемпе усă курма вĕренсе пыни;
- кĕнекепе ирĕклĕн ĕçлеме пĕлни:  уйрăм палăртусемпе, тупмаллисемпе усă курса кирлĕ текста, унти палăртнă вырăнĕсене хăвăрт тупса сĕннĕ ĕçĕсене пурнăçлани;
- тĕрлĕ информаци çăл куçĕпе усă курма пултарни;
- кĕнекепе: словарьсемпе, справочниксемпе, текст патне панă иллюстрацисемпе ĕçлеме хăнăхса пыни;
- вулавăн тĕрлĕ тĕсне (паллашуллă, тĕпчевлĕ-тишкеруллĕ, суйлавлă,шыравлă) алла илсе пыни;
- мăшăррăн, пĕчĕк ушкăнпа пĕрле ĕçлеме - хăйсем хушшинче рольсемпе ĕçсене уйăрма, пĕрлĕхлĕ ĕçĕн харкам пайне пурнăçлама  вĕренсе пыни.
**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- текстпа ĕçлеме пултарни: темипе тĕп шухăшне палăртни: тишкеру ыйтăвĕпе çыхăннă информаци тупни;
- пĕтĕмлетусем патне пыма, пулăмсемпе сăнарсен хăтланăшĕсен çыхăнăвĕсене ăнланма, сăлтавлама вĕренсе пыни;
- текстра геройсен шухăшне çирĕплетекен вырăнсене тупма пултарни;
- сăнарсен ĕçĕ- хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл-туйăмне тишкернĕ-сăнанă май пĕтĕм этемлĕх ырлăхĕсемпе пахалăхĕсене ăша хума, ырăпа усала уяс хăнăхусем аталанса пыни;
- илемлĕ литература жанрĕсен (тĕрлĕ юмах, калав, сăвă, юптару) т.п уйрăмлăхĕсене курма вĕренсе пыни.

### *4- класран вĕренсе тухнă тĕле кĕтекен результатсем*

**Харкамлах результачесем:**
- вулав харкам аталанăвĕшĕн мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланни;

- тĕнче литература пулминче чăваш литературин тупи те палăрмаллах пысăк пулнине ăнкарни;

- этемлĕх çырулăхĕн пуянлăхне ăнланма, хисеплеме, унпа киленме вĕренсе пыни;

- ачасен вулав пултарулăхĕ çирĕпленнипе пĕрлех хайлавçă пултарулăхĕ те амаланса пыни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**
- пĕр ыйтупах тĕрлĕ позици пулма пултарнине ăнланни, вĕсенчен пĕрне суйласа илме е хăйĕн урăхла шухăшне каласа пама вĕренни;

- литература вулавĕн предмечĕ шалашĕнче проектсем пурнăçланă май вĕрену задачисем лартма, вĕсене татса памалли çул-йĕр палăртма вĕренсе пыни;

- илемлĕ литература тăван халăх культурин пĕлтерĕшлĕ пайрамĕ пулнине ăса хуни, илемлĕ литература хайлавĕсене унер единици пек йышăнма вĕренсе çитни.

**Предметăн пайрам результачĕсем:**

- фольклор хайлавне автор хайлавĕнчен уйăрса илме: проза жанрĕсене (калав: юмах: повесть) уйăрма, тĕп паллисене палăртма пĕлни;

- текстра илемлӗ сӑнарлӑх мелӗсене ( сӑпатлантару: танлаштару: эпитет, тепӗр хут калани , сасӑ ҫырӑвӗ) тупма пӗлни;
- хайлав ӑшлӑхне пӗр тӗвӗре ( ӗҫ пуҫламӑшӗ - ӗҫ аталанӑвӗ – чи ҫивӗч самант – ӗҫ вӗҫӗ) курма пултарни;
- героя унӑн хӑтланӑвӗ тата текстра тӳррӗн панӑ характеристики тӑрӑх хак пама, геройсене хак пани тӑрӑх автор вӗсене мӗнле куҫпа пӑхнине чухлама пултарни;
- литература хайлавӗ ҫинчен ансаттӑн каласа пама ( вӑл халӑхӑн е автор хайлавӗ, унӑн тӗсӗ (проза, поэзии, драма), сюжетри тӗп йӗрсем, унӑн тӗп шухӑшӗ) пӗлни;
- авторпа, унӑн пултарулӑхӗпе кӗскен паллаштарма (поэт е писатель, хӑш вӑхӑтра пурӑннӑ, ытларах мӗн ҫинчен ҫырать ( ҫырнӑ) каласа пама пултарни;
- авторӑн тата харпӑр хӑйӗн кӑмӑлне палӑртса литература хайлавӗн персонажӗсене хак пама пӗлни;

## 2. Предметӑн шалашӗ (содержанийӗ)

**Пуплев ӗҫӗн тӗсӗсем**

**Итлесси.** ачасем вӗрентекен хушӑвӗсемпе кӗске пӗлтерӗвӗсене тата юлташӗсем каланисене итлесе ӑнланасси.

Текст содержанине туллин ӑнланса илмелли пӗлӳсене тата хӑнӑхусене аталантарасси.

Текстӑн тӗп содержанине ӑса хывса ӑнланмалли пӗлӳсемпе хӑнӑхусене аталантарасси.

**Калаҫасси.** Ҫанталӑк ҫинчен каласа парасси (халӗ мӗнле ҫанталӑк: ӑшӑ е сивӗ, ҫумӑр, юр ҫӑвать е уяр, хӗвел пӑхать т. ыт. те), ҫулталӑк вӑхӑчӗсем (пӗр-пӗр вӑхӑтра ҫутҫанталӑкӑн мӗнле пулӑмӗсем палӑраҫҫӗ: ҫумӑр, юр; ачасем ҫулталӑкӑн ку е вӑл вӑхӑтӗнче мӗн-мӗн тӑваҫҫӗ).
Пӗр класра вӗренекен ача ҫинчен каласа парасси: вӑл миҫере, унӑн сӑнӗ-пичӗ, тумтирӗ, вӑл мӗн тума юратать. Юратнӑ уяв (мӗнле уяв вӑл, хӑҫан килет, ӑна мӗнле паллӑ тӑваҫҫӗ), юратнӑ апат-ҫимӗҫ.

Кӗске калавсем хӑйласси: ҫулла ӑҫта пулни, унта мӗн курни ҫинчен, мӗн-мӗн ӗҫлени, сывлӑха епле ҫирӗплетни ҫинчен. Шкул ҫинчен, кружоксем ҫинчен, юратнӑ учительсем, вӗренӳ, расписани ҫинчен (хӑш-хӑш кун мӗнле предметсем пулаҫҫӗ). Мӗн тума юратни ҫинчен, килти юратнӑ чӗр чун ҫинчен (мӗн ятлӑ, миҫере, кӑмӑлӗ, кӗлетки мӗнле, унӑн тӗсӗ, мӗн-мӗн ҫитеретӗн ӑна). Зоопаркра курнӑ пӗр-пӗр чӗр чун ҫинчен.

Юлташа (пӗр класра вӗренекене) ӑҫта та пулин каймашкӑн чӗнме, сӗннипе килӗшме е хирӗҫлеме хӑнӑхасси. Юлташран ерҫӳллӗ вӑхӑтра мӗн-мӗн туни, мӗн тума кӑмӑллани, ӳссен кам пулма ӗмӗтленни ҫинчен ыйтса пӗлесси. Ҫуллахи кану, юратнӑ уяв (ӑна епле irттерни) ҫинчен калаҫасси. Пӗр- пӗрне, пӗлӗшсене, хурӑнташ-тӑвансене саламлама, ырӑ сунма, саламланине хуравлама хӑнӑхасси.

Вуланӑ текст тӑрӑх ыйтусем парасси, унӑн содержанийӗпе килӗшӳллӗн калаҫма хутшӑнасси.

Сӗннӗ йӗрке тӑрӑх текст содержанине каласа парасси, ыйтуллӑ предложенисенчен, тӗп сӑмахсенчен тата ҫирӗплетӳ пуплевӗнчен тӑракан план хатӗрлесси.

Вуланине тата курни-илтнине сӳтсе явмалли пӗлӳсемпе хӑнӑхусене аталантарасси.

Текст содержанине сӑмахпа уҫса парасси

Текста улӑштармалли пӗлӳсемпе хӑнӑхтарусене йӗркелесси.

Панӑ тӗслӗхсем тӑрӑх диалогсем йӗркелесси.

Диалогсем тӑрӑх инсценировкӑсем хатӗрлесси.

ӳкерчӗк тӑрӑх пурте пӗрле, пӗчӗк ушкӑнпа е уйрӑмшарӑн калав хатӗрлесси.

**Вуласси.** Сасӑпа вулас ӑсталӑха ӳстересси. Ӑсра вуламалли хӑнӑхӑва аталантарасси.

Сӑмах вӗҫҫӗн ӑса хывнӑ сӑмахсене тата сӑмах ҫаврӑнӑшӗсене вуласа ӑнланасси.

Вӗренӳ тексчӗсене ӑсра е сасӑпа вуласси, вӗсенчен кирлӗ информацие суйласа илесси, кирлӗ май страница вӗҫӗнчи асӑрхаттарусемпе, словарьсемпе усӑ курасси.

Вӗренӳ тексчӗсене ӑсра е сасӑпа вуласси, вӗсенчен кирлӗ информацие ӑса илесси, унпа харпӑр хӑй пуплевӗнче усӑ курасси, ҫавӑн пекех, чӗлхе материалне сӑнаса, сӑмахсене мӗнле каланине тата ҫырнине, сӑмах пулӑвӗн ҫыхӑнӑвӗсене, сӑмах улшӑнӑвӗн сӑлтавӗсене палӑртасси.

Вӗренӳ тексчӗсене ӑсра е сасӑпа вуланӑ май вӗсен пӗтӗмӗшле пӗлтерӗшне ӑнланса илесси.

Темиҫе палламан сӑмахлӑ вӗренӳ тексчӗсене ӑсра вуласси, вӗсен содержанине туллин тӗрӗс ӑнланса илесси, текста пӗлтерӗшлӗ пайсене уйӑрасси.

Текстсене ят парасси.

Кирлӗ мар информацие сирсе хӑварса, текстсене кӗскетесси.

Текст содержанине ыйтусем тӑрӑх, планпа килӗшӳллӗн, тӗп сӑмахсемпе пуплерӗшсем тӑрӑх каласа парасси, ҫавна май глаголсен сӑпат тата вӑхӑт формисене улӑштарасси.

Тӳрӗ пуплевлӗ текстсене вуласси.

Сӑвӑсене илемлӗн вуласси, вӗсене пӑхмасӑр калама вӗренесси. Диалогсене кирлӗ интонаципе вуласси.

**Текстпа ӗҫлесси**

Ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси. Вуланӑ текстӑн тӗп шухӑшне харпӑр хӑй тӗллӗн палӑртасси, унӑн пайӗсем шухӑш енӗпе мӗнле ҫыхӑнса тӑнине асӑрхасси, текстӑн планне тӑвасси. Мӗн вуланине харпӑр хӑй тӗллӗн тунӑ планпа усӑ курса туллин, кӗскен, суйлавлӑн аса илсе каласси. Пӗр-пӗр темӑпа калав тумалли материала текстра тупса палӑртасси.

Хайлаври ӗҫсене тӗрӗс, йӗркипе аса илесси. Сӑнлавлӑ, уйлалӑ элементсемпе диалог кӗртнӗ теста аса илсе каласси, тӳрӗ пуплеве тӳрӗ мар пуплевпе улӑштарасси.

Сӑнарсен пуплев уйрӑмлӑхӗсене сӑнасси, вӗсен ӗҫӗсене, кӑмӑл-туйӑмне танлаштарасси. Сӑнарсем мӗншӗн, мӗн пирки ҫапла тунине каласси. Хӑйсем тата автор ҫав пулӑмсемпе сӑнарсене мӗнле хакланине палӑртасси.

Калаври, сӑвӑри, юмахри сӑмахсен пӗлрерӗш уйрӑмлӑхӗ-сӗмӗсене ӑнкарасси, вӗсемпе пуплевре усӑ курасси. Пулӑма, ҫут ҫанталӑка, ҫынна витӗмлӗ сӑнлакан сӑмахсене, вӗсен майлашӑвӗсене хайлавра тупасси, вӗсене ӑнланасси.

Сӑнар ячӗпе е унӑн ятне, калавҫӑн сӑпатне улӑштарса каласа парасси; калава малалла тӑсасси, сӑнарӑн малашнехи пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен хушса каласси; сӑнлавпа уйлав элеменчӗсем кӗртсе пулни-иртни, курни- илтни ҫинчен калав тӑвасси. Халӑх сӑмахлӑхӗ, калав сӑвӑ, юптару ҫинчен I-IV классенче илнӗ пӗлӗве ҫирӗплетсе пӗтӗмлетесси.

Илемлӗ литература стилӗпе ӑслӑлӑх стилӗн уйрӑмлӑхӗсене асӑрхама хӑнӑхтарасси.

Ачасен сӑмах йышне куллен пуянлатса ҫӗнетесси.Вӗсен пуплевӗн пахалӑхне лайӑхлатасси. Калаҫура та, вуланӑ чух та шухӑш- туйӑма интонаци мелӗсемпе тӗрӗс палӑртасси.

**Вӗрунӳ кӗнекине чухласси:** тупмаллине, пулӑшу тата меслет аппарачӗпе усӑ курасси.Кӗнекепе хӑйсем тӗллӗн ӗҫлесси.

**КЛАСС ТУЛАШӖНЧИ ВУЛАВ**

**Вулав материалӗ:**Кӗҫӗн ҫулхи ачасем валли кӑларнӑ чӑваш, вырӑс тата ытти тӑванла халӑхсен, ютри ҫыравҫӑсен кӗнекисем. «Тетте» журналпа, «Тантӑш» хаҫатри материалсем.

**Вулав тематики.** Аваллӑх ҫинчен. Ырӑ пурнӑҫа ӗмӗтленсе пурӑнакан халӑхӑн кулленхи ӗҫӗсем. Ачасен ӗҫӗ-хӗлӗ. Чӑваш, вырӑс тата ытти тӑванла

халӑхсен юмахӗсем. Тӑван халӑх историйӗпе унӑн ывӑл-хӗрӗ, ал ӗҫ тата ӑс-хакӑл культури ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем. Нукӑпа техника темипе ҫырнӑ ачасем ӑнланмалла статьясем. Темтепӗр курса ҫӳрени ҫинчен калакан статьясем.

**Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси.** Класс тулашӗнчи вулав урокне хатӗрленнӗ май кирлӗ кӗнекене харпӑр хӑй тӗллӗн суйласа вулама, тӗрлӗрен пулӑшу кӗнекипе, хаҫат-журналпа усӑ курма пӗлесси.

Вĕрентӳçĕ сĕннĕ е харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса мĕн вуланине кĕскен каласа парасси, вуланă сăнар çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Вулама сĕннĕ темăпах 3-5 кĕнеке таран пĕлесси. Пулăшу кĕкнекисемпе усă курасси.
«Тантăш» хаçатпа «Тетте» журнала тĕллевлĕн вуласси, вĕсемпе урокра тата класс тулашĕнче усă куоасси.
Кĕнеке мĕн çинченнине унăн хуплашки, титул листи, тупмаллипе ӳкерчĕкĕсем, ум сăмахĕпе юлашкинчен калани тăрăх ăнкарасси. Кирлĕ кĕнекен е хаçат-журналти статьян ятне, унăн авторне кăтартса тĕрĕс çырса илесси. Кăмăла каякан кĕнекене харпăр хăй тĕллĕнех библиотекăран илсе вуласси.

# 3 класс (34 сех) – эрнере 1 сехет

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1. | «Çамрăкла вĕренни – чул çинче» Г.Волков.<br>«Вĕреннĕ лаша» Г.Сапгир | 1 |
| 2. | «Чи хаклă парне» К.Беляев. Р.Петрова куçарнă | 1 |
| 3. | «Тăван çĕр шыв – пирĕн анне» К.Ушинский « Ылтăн çĕр» Хуначи Кашкăр | 1 |
| 4. | «Лăпкă çĕр шывра». Н.Янкас «Туслăх сăмахĕ». С.Вишневский, | 1 |
| 5. | «Кĕрхи сăнсем». «Кĕр пасарĕ». «Кĕрхи вăрманта». «Кĕрхи хурăн». | 1 |
| 6. | «Çулçă». О.Туркай «Сивĕтет çанталăк». Н.Янкас | 1 |
| 7. | «Тупмалли юмахсем». «Вăйă юррисем». «Хăш-пĕр хускану вăййи-йĕрки» | 1 |
| 8. | «Ăсансене ертсе килни» К.Чулкаç | 1 |
| 9. | «Ула куракпа тилĕ» И.А.Крылов «Пакшапа Кашкăр». | 1 |
| 10. | «Улăпсем». Г.Юмарт | 1 |
| 11. | «Ту çинчен аннă Улăп». «Çунатлă урхамах» | 1 |
| 12. | Чăваш халăх юмахĕ «Чее такасем» | 1 |
| 13. | Пушкăрт халăх юмахĕ «Курай юмахĕ» | 1 |
| 14. | Удмурт халăх юмахĕ «Пакшапа мăйăр» | 1 |
| 15. | «Хĕл пуçламăшĕ» В.Эктел «Хĕлле» А.С.Пушкин. «Хĕллехи çу кунĕсем» Н.Сладков | 1 |
| 16. | Чăваш халăх юмахĕ «Хырпа чăрăш тата Уртăш мĕншĕн яланах симĕс?» | 1 |
| 17. | «Йĕлтĕрпе» В.Харитонов «Халăх хайлавĕ майлă» А.Смолин, «Мулкач йĕрĕпе» Г.Харлампьев | 1 |
| 18. | «Намăсланакан çĕнтерӳçĕ» Н.Силпи | 1 |
| 19. | «Йăмăк». Н. Карай «Çывракан ача». М.Джалиль | 1 |
| 20. | «Шăна кăмпин шăпи» А.Галкин « Чечек çыххи». Н.Иванов «Кĕрен тӳпе» И.Шухши | 1 |
| 21. | «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет» Г.Волков | 1 |
| 22. | «Хапхаçă». А.Ерусланов | 1 |
| 23. | «Шăвăç витре». Исмай Исемпек | 1 |
| 24. | «Вăрманти ачасем». К.Ушинский | 1 |
| 25. | «Çурхи тĕнче». Н.Исмуков «Çуркунне пуçланать». Л.Смолина «Ешĕл шав». Н.Некрасов | 1 |
| 26. | «Çурхи вăрманта» Мĕтри Кипек, «Вăрманта». Н.Соколов-Микитов | 1 |
| 27. | «Малтанхи хĕвел» Г.Снегирев | 1 |
| 28. | «Аптраман кăвакалсем». Н.Ишентей, «Кашкăрсемпе çапăçни». Ç.Элкер | 1 |
| 29. | «Ăсанпа Хураçка». Н.Иванов | 1 |
| 30. | «Уртăш». Н.Матвеев «Çара çерçи». Н.Матвеев | 1 |
| 31. | «Каюра». Н.Матвеев «Кашкăр тавăрăвĕ». Г.Орлов | 1 |
| 32. | «Çулçӳревçĕ вăрăсем». «Пĕлĕтсем, ăçта васкатăр?» М.Волкова «Пĕлĕтсем – шур путексем» Р.Сарпи | 1 |
| 33. | «Тарăхнă така». Хв. Уяр «Лĕпĕш». Х. Юлдашев. | 1 |
| 34. | «Çуллахи каникул». Уйăп Мишши, «Кӳлĕ хĕрринче» Г.Харлампьев | 1 |

## 4. ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВ ĂСЛАЙĔСЕМПЕ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ ТĔРĔСЛЕСЕ ХАКЛАССИ

### 3 класс

**„5‘ паллă çакăн чухне лартмалла**:ача мĕн вуланине туллин ăнлансан;

1- мĕш çур çулта тулли сăмахăн (пĕрремĕш хут тĕл пулнă сăмахсене сыпăкласа), пĕр тикĕссĕн, тивĕçлĕ интонаципе минутра 65 (ăшра 80) сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта тĕрĕс ăнланса. Пĕр тикĕссĕн. Сăмахсене вакламасăр, текст пĕлтерĕшĕпе шухăшне шута илсе тивĕçлĕ интонаципе(хăвăрт е хуллен, сасса хăпертса е хăпартмасăр, логика пусăмĕпе тăхтавсем туса) минутра 75(ăшра 80] сăмахран кая мар вулать; вуланине туллин, кĕскен тата суйлавлăн каласа пама, пысăках мар текст пайĕсене харкам тĕллĕн уйăрса ят пама. Ансăрплан тăрăх каласа пама. Ыйтусене хуравлама, шухăшне текстри тĕслĕхпе çирĕплетме. Хайлавăн тĕп шухăшне ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшсемпе палăртма. Текста асăмласа каласа панă чухне сăнарлă сăмахсемпе усă курма пĕлет; автор герой çине мĕнле куçпапăхнине, сăаă. Калав. Юптару, пьеса ансат уйрăмлăхĕсене чухлать; пăхмасăр каласа памалли сăвă текстне çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă каласа парать.

**«4” паллă çакăн пек чухне лартмалла**: вĕренекен вуланă текста ăнланать пулсан;

1-мĕш çур çулта текста палăртуллăн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса, йăнăшсене тӳрлетсе пырса, минутра 50 сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ 65 сăмахран кая мар, вулавра 1-2 йăнăш, ача ăна хăех тӳрлетет; сăвва палăртуллăн, тивĕçлĕ интонаципе пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах та пысăках мар йăнăшсем (пĕр сăмахах темиçе хут калани, пăтраштарни ) тăватью

**„3‘ паллă çакăн пек чухне лартмалла**: вĕренекен ача текстăн щухăшне вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç ăнланать пулсан:

1-мĕш çур çулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсеневакласа), сасса улăштармасăр минутра 50 сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 60 сăмахран каямар, ача сăмахсене, сыпăксемпе сасăсене 4-6 çĕрте пăтраштарса, сиктерсе хăварса, вĕсене вырăнĕпе ылмаштарса. Сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс мар туса вулать; мĕн çинчен вуланине çыхăнуллăн каласа пама пĕлместь, текст пайĕсене уйăрса ят пама вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç пултарать, пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене пулăшмасăр тӳрлетеймест; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕпех пĕлмест.

„**2» паллă çакăн чухне лартмалла**: вĕренекен ача 1-мĕш çур çулта сасса улăштармасăр. Сăмахсене вакласа. минутра 35 сăмахран кая мар вулать;

2 –мĕш çур çулта хăш пĕр сăмахсене çе вакламасăр минутра 45 сăмах таран вулать; 6 йăнăшран нумайрах тăвать: мĕн вуланине пăтраштарса, çыхăнусăр каласа парать, вĕрентекен ыйтăвĕсемпе те текстăн пайĕсене уйăрма пĕлиест; сăввăн пысăк пайне пăхмасăр каласа пама пултараймасть;

**„1“ паллă çакăн пек чухне лартмалла**: ача сăмахсене сыпăкласа та вулаймасть; мĕн вуланине ăнланмаст, каласа параймасть; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлмест.

## Класс тулашĕнчи вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене тĕрĕслесе хакласси

### 3 класс

**„5“ паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача урок тĕлне кĕнекене вĕрентӳçĕ асăрхаттармасăрах е пулăшмасăрах вуласа килет, пĕр-пĕр кĕнекене унăн паллисем. Вĕрентӳçĕ сĕннĕ тема тата хăйне килĕшни тăрăх кĕнекесенчен çăмăллăнах уйăрса илме пĕлет, вулани çинчен каласа панă чухне хăйĕн мĕн пур вулав ăслайĕсемпе тата хăнăхăвĕсемпе усă курать. Калаçăва тимлĕн хутшăнать. Текстра пĕр-пĕр вĕçленнĕ шухăша кăтартакан вырăна (эпизода) уйăрса илме. Ун çинчен тĕрлĕ мелпе (туллин, кĕскен, сăмахлă ӳкерчĕк туса) каласа пама пултарать; класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче тишкернĕ 1-2 çыравçăн кĕнекисене çăмăллăнах аса илеет пулсан.

**‚4‘ паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача кĕнекесен ушкăнĕсенчен вĕрентӳçĕ сĕннĕ темăпа е сĕннĕ списокран хăйне килĕшнĕ кĕнекене çăмăллăнах суйласа илет пулсан; вулани çинчен каласа панă чухне вĕрентӳçĕ асăрхаттарнипе хăйĕн вулав ăслайĕсемпе тата хăнăхăвĕсемпе усă курать, класс тулашĕнчи вулав урокĕсен ушкăнла ĕçне хастар хутшăнать, вулани çинчен вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем е хатĕрплан тăрăх каласа панă чухне йăнăшсем тума пултарать, анчах хăйне мĕн килĕшни е килĕшменни çинчен каласа параять; класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче тишкернĕ 1-2 çыравçăн кĕнекисене аса илеет, анчах вĕсен ячĕсене асăнса тухнă чухне кăштах йăнăшать пулсан.

**„3‘ паллă çакăн пек чухне лартмалла:**ача пĕр-пĕр кĕнекене вĕрентӳçĕ сĕннĕ темăпа суйласа илме пĕлет. Анчах класс тулашĕнче вуламалли виçерен сахалтарах вулать, кĕнекене ушкăнпа сӳтсе явасĕçе хастар хутшăнмасть, класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче сӳтсе явнă кĕнекесен авторĕсене аса илме пултарать. Хайлавсен ячĕсене асăннă чухне йăнăшсем тăвать.

Класс тулашĕнчи вулавшăн ку класра та япăхрах паллăсем лартмалла мар.